Н 32-Н
42 а
К 4С(чув)
Т 76
28320-чув

А. Т. ТРОФИМОВ



# БУКВАР

ЧӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ
ИЗДАТӖЛСТВИ
ШУПАШКАР
1936

Национальная библиотека ЧР
4-028320

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Заказ 860 Тираж 10.000 1983г.

Чув.
3 | 2000а
ПРОВЕРЕНО
20 10 16 АВГ 2017
К
ЧС(чув)
Т76





ЯК 28320 чув.
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР


3+1=4











# А









# Н









# НА

НА 



АН
НА
АНА
АННА




АННА

АН | НА

*а а а н н н а а а*

*на на на ан ан*

АН | НА

*ан* | *на*

# У



УН

НУ

УНА







УХ

АХ

УХ УХ

Х

УХ

| У | Х |
|---|---|

*а а а а а с с с с*

*х х х х х х х*




*ах*



Р

ХУР

Х | У | Р

**ХУР**

ХУР
ХУРА
ХУРАН

ХУРАН
ХУРА
УРА









| Т |
|---|

| турат | |
|---|---|
| ту | рат |

| т | у | р | а | т |
|---|---|---|---|---|

**турат**

Анна, турат турт. А а
Турат хур.

| | | |
|---|---|---|
| тура | турат | тута |
| хура | хурат | турта |

*т турат*



К

ку | рак

к | у | р | а | к

**курак**

Курак кур.

Ак курак.

Ку курак хура.

Хура курак.

*К К К*

*курак*



| |
|---|
| С |

| | |
|---|---|
| су | хан |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| с | у | х | а | н |

# сухан

Ак сухан.
Ку сухан.
Тарас, на сухан.

| | |
|---|---|
| карас | суха |
| кас | сухан |



*о о о с с Тарас.*



**ыхра**

| Ы |
|---|

| ых | ра |
|---|---|

| ы | х | р | а |
|---|---|---|---|

Ак ыхра.

Ыран ыхра тат.

Сахар, тыт ыхра.

Ыхрана усра.

| | |
|---|---|
| ыхра | хыр |
| ыран | сыр |





# Ы р а ш.

ш

ы р а ш

Ку ыраш.
Ыраш таса.
Таса ыраш.
Таса ыраш акар.

*ш*

Суха сухала.
Ыраш ак.

*Таса ыраш.*




Л

шкул

| | | | |
|---|---|---|---|
| ш | к | у | л |

# Шкул.

Шкул таса.

Анна шкулта.

Тарас шкулта.

Сахар, шкула тухса ут.

*л л л*

*Шкул таса.*



# Лаша.

Лаша сухара.

Ула лаша сухара.

Хура лаша сухара.

Сахар сухара.

Тарас, сухала.

**ла | ша**

*Л*

*Лаша сухара.*

28320 - чув.

Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР



# П

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| п | у | к | а | н |
| п | у | к | а | н |

**Ку пукан.**
**Ак пукан.**
**Анна, лар.**



**Хапха хупас.**
**Хапхана хуп.**
**Хапха паха.**

*п*

*пукан*



М

арман

| а | р | м | а | н |
|---|---|---|---|---|

**Арман.**

Армана ыраш антар.
Ыраш сахал мар.
Ыраша алама ан ман.
Аласан ыраш таса.



| арман | ар | ман |
|---|---|---|
| ларман | лар | |



Ак улма.
Улма тат.
Марук, на улма.
Улма сахал мар.





Мана улма,
сана салма.

*Мана улма,*
*сана салма.*

ул — ма
сал — ма

| | |
|---|---|
| Ă | ă |

| | |
|---|---|
| п у | л ă |

| | | | |
|---|---|---|---|
| п | у | л | ă |



## Пулă.

Марукпа Тарас пулă тытнă.
Пулă пысăк пулнă.
Аран туртса кăларнă.



**Уланкă пулă.**



**Карас пулă.**

*Ăă*

*Тарас пулă тытнă.*

Сахар пăшал тунă.
Ак пăшал.



## Раман.



Раман урама тухнă.
Урана атă тăханнă.
Раман шăнман.
Ан шăн, Анна.
Сăхман тăхăнса тух.

Р р

Раман шăнман.



# Вăрман.

В

Вăрман аслă.

Вăрманта хурăн, ăвăс сахал мар. Унта хыр, тата вată хурама пур.

Вут хурас та ăшăнас. Хуранта шыв ăшăтас.

Хурама 

Хыр 

Вв

Вăрман аслă.

# Павăл.

Раман шатрапа выртнă.
Павăл Рамана курма пынă.
Павăла та шатра тухнă.
Павăла пăхма тухтăр пынă.
Тухтăр ăна тула тухма хушман.
Павăл сывалнă.

---



Аллуна, уруна таса тыт.
Шăлна та таса тыт.
Манăн шăл таса.

*Шăла таса тыт.*



# Шкул.

Шкул пысăк, таса.
Тарас, Машук, Раман,
Павăл, Сахар—шкулта.
Шкула таса тытар.

---

Пăх-ха, Павăл, манăн парта тап-таса. Санăн партту таса мар. Хăвăн парттуна шăлса тасат.

*Сахар шкулта.*



**И**

| ш | ă | ш | и |

Иван класра ларнă. Шкапран шăши тухнă.

Шăши Ивана курсанах тарса пытаннă.

## Кушакпа шăши.

Кушак ним хускалмасăр выртнă. Шăши ăна курса савăнса ларнă.

Кушак тăнă та шăшийе тытнă.

*Шш*

*Кушакпа шăши.*



## Кушакпа шăши.

Марук кушак.
Иван шăши.
Кушакăн шăши тытмала.
Шăшин кушакран тармала.
Марук Ивана кап! тытнă.

*Иван шăши курнă.*

Е е



## Пукане.

Лисукăн пукане пулнă. Пуканене вăл аван пăхнă. Таса тумтир, пушмак тăхăнтарнă.

Атте.
Анне.

*Ее*

*Атте. Анне.*



çурла



мăлатук

# Çурлапа мăлатук.

Хутран çурлапа мăлатук турăмăр. Тата çăлтăр касса кăлартăмăр.

Класа çапса хутăмăр.





*Çç*

*Çурла Мăлатук.*



# Уçăп.

Канмали кун пулнă. Уçăп пăшалпа вăрмана уттарнă.

Унпа Хураçка пынă.

Уçăп ăсан курнă.

Хураçка малта пынă.

Ăсан Хураçкаран хăраса тарнă. Хураçка ăна хăваланă.

*Уçăп ăсан курнă.*



Ĕĕ

# Ĕ н е.

Пирĕн ĕне пур.
Пирĕн ĕне хĕрлĕ.
Вăл питĕ сĕтлĕ.
Епĕр сĕт ĕçетпĕр.
Сĕтрен турăх та тăватпăр.

---

Сĕт ĕçме те,
çиме те аван.

*Ĕĕ*

*Хĕрлĕ ĕне.*



Кроликсем.

О

кролик

кро | лик

Пирĕн шкулта кроликсем пур. Пĕрре мар, вуннă та ытла.

Пит илемлĕçке кроликсем.

Вĕсем шап-шурă, хăлхисем вăрăм. Епĕр çывхарсанах вĕсем хăлхисене кăлт çĕклесе пăхаççĕ.

Кроликсене пионерсем пăхса усраççĕ.

Кролик.

Пионер.

*О о*

*Кролик илемлĕ.*




# Колхоз.

**Зз**

Колхозра пурӑнма аван.
Унта тырӑ тулӑх.
Колхозра паха лашасем пур, ӑратлӑ сыснасем сахал мар. Ӗнесем шултӑра та сӗтлӗ.

*З з*

*Колхозра тырӑ тулӑх.*



## Трактăр.

Трактăрпа сухалама та, тырă акма та, вырма та аван.

Трактăр—машинă.

Колхозра тырă акмали, тырă вырмали машинă пур.

*Машинăпа тыра вырма аван.*

*Чч*  Ч ч

## Чăхсем.

Пирĕн колхоз кăçал чĕпсене машинăпа кăларчĕ.

Чĕпсене çу каçиччен пионерсем пăхса çитĕнтерчĕç. Чĕпсем халĕ ватă чăхсем пекех пысăк.

### Чĕкеç.

Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм, ларса канма пĕлмерĕн, кунĕпе апат пуçтартăн, ачусене çитертĕн.



*Чăх çăмарти.*

## Автан.



Автан хура уралă, хěрлě çěлěклě, кусěсем сиксе тухас пек, сăмси кукăр.

Пěрре епě ун патěнчен иртсе цыратăп. Вăл çуначěсемпе çапрě те, çăварне карса: ки-ки-рик! терě.

### Автан тус.

**Автан тус, автан тус!**
**Хěрлě çěлěк, çулă пуç.**
**Мěншěн ытла ир тăратăн?**
**Мěншěн хытă кăшкăратăн?**
**Мана çывăрма памастăн.**




## Шкул пахчи.

Пирĕн шкул пахчинче купăста, çĕрулми, кишĕр шултăра пулчĕ.

Сивĕте пуçласан, епĕр вĕсене васкаса кăлартăмăр. Хĕлле çиме пуçтарса хутăмăр.

*Купăста. Кишĕр.*
*Çĕрулми. Çарăк.*



# Ťыхасем.

Ť ť

Колхозăн ťыхасем пур. Ťыхасене Хвеťук пăхаť. Вăл ťыхасене апат параť, шăвараť, хырчăкласа тасатаť.

Ťыхасем Хвеťука палласçĕ. Ăна курсанах кĕçенеççĕ.

*Хвеťук ťыхасене*
*аван пăхаť.*

Й й

*Йй*



# Йакурпа кăсийа.

Йакур кăсийа тытнă. Вăл ăна класа илсе пычĕ. Ачасем пурте пыра-пыра пăхрĕç.

**Тăри сасси илтĕнмест.**
**Хура курак курăнмасť.**
**Чакак пĕрмай чаклатаť.**
**Ула кайăк сас параť.**



Кайăксене хĕрхенĕр. Сивĕ хĕлте вĕсене тăрантарăр. Çула вĕсем хурт-кăпшанкăсене пĕтереççĕ. Пире усă тăваççĕ.

*Йакур кăсийа тытнă.*



## Кĕркунне.

Ăшă çу иртрĕ. Сивĕ кĕр çитрĕ. Кăвак пĕлĕт хупланчĕ. Хĕвел тарса пытанчĕ. Çеçен хир çаралчĕ.

Йĕри - тавра пылчăк. Кайăксем кăнтăр йенне вĕççе кайрĕç.

---

**Хир илемĕ кайаť.**
**Сĕм вăрман çаралаť.**
**Пĕрмай çăмăр çаваť...**
**Вăл хăçан пулаť-ши?**

*Ăшă çу иртрĕ.*

## Хурăн.

Хурăн çулçи сарăлсан,
килет вăрман илемĕ.
Хурăн çулçи тăкăнсан,
кайаť вăрман илемĕ.





## Хĕллехи кайăксем.

Кĕркунне Мишша ашшĕпе вăрмана кайнă. Вăрманта йăвăç çулçисем те, курăксем те сарăхнă. Çырла, кăмпа, мăйăр, йĕкел,— нимĕн те йулман. Кайăксен йурри те илтĕнмен. Вĕсем ăшă йенне, хĕл пулман çĕре, вĕççе кайнă.





# Шкулта.

— Калăр-ха, ачасем, шкулта есĕр мĕн тăватăр?

— Шкулта епĕр вулатпăр, çыратпăр, шутлатпăр, йурлатпăр, картинăсем тăватпăр.



Хутран лашасем, çынсем касса кăларатпăр.

Тăмран кĕлеткесем тăватпăр. Каскаласа йапаласем тăватпăр.





## Ĕç кĕтесси.

Шкулта ĕç кĕтесси пур. Унта пăчкă, сава, пуртă, мăлатук, хачă пур.

Ĕç кĕтессинче епĕр ĕçлетпĕр. Унта епĕр каскалатпăр, савалатпăр. Пăчкăпа тататпăр. Мăлатукпа шаккатпăр.



*Пăчкăпа татаççĕ.*
*Савапа савалаççĕ.*
*Хачăпа касаççĕ.*



Љ

## К о љ ӑ.

Кољӑ чирлӗ выртнӑ. Амӑшӗ ӑна пӗремӗк панӑ. Кољӑ пӗремӗкне пӗрре ҫыртнӑ та ҫумне хунӑ.

Љава пӗремӗке илнӗ те ҫисе йанӑ. Хайхи Љава тепӗр куннех Кољӑ чирӗпе чирленӗ.



## Лисук.



Лисук сывӑ пурӑнат̆. Вӑл ир те, каҫ та таса шывпа ҫӑвӑнат̆. Уйрӑм алшӑллипе шӑлӑнат̆.

Лисук уйрӑм чашӑкран апат ҫийет. Апат ҫинӗ хыҫҫӑн вӑл йаланах ҫӑварне чӳхет.



## Хӗл ҫывхарат̆.

Ҫанталӑк сивӗтрӗ. Ҫӗр вӑрӑмланчӗ. Кун шкултах иртет. Сайра хутра йур ҫукалат̆. Ҫийе ӑшӑ тумтир, пуҫа ҫӗлӗк тӑхӑнма лекет.

Ҫырмари пӗвесем пӑрланса ларчӗҫ.
Йур ҫӑват̆, ҫӗр шуралат̆.
Хӗл ҫывхарат̆.

---

**Хирсенче йур анчах,**
**ҫырмара пӑр анчах.**
**Сивӗтет аванах.**
**Вӑл хӑҫан пулат̆-ши?**

*Йур ҫӑват̆. Хӗл ҫывхарат̆.*

# Кун йӗрки.

Епӗ ирхине 8 сехетре тӑратӑп. Пите-куçа çӑватӑп, тумланатӑп. Унтан ирхи апат çийетӗп те шкула кайатӑп.

9 сехетре вӗренме тытӑнатпӑр. 3 урок иртсен, вӗри апат çиетпӗр. Унтан тата тепӗр сехет класра вӗренетпӗр. Хӑш кун тата ӗç кӗтессинче ӗçлетпӗр.

Киле таврӑнсассӑн, епӗ ачасемпе выљатӑп. Каçхине кӗнеке вулатӑп, картинӑсем тӑватӑп.



## Мӗн вӑл?

Чик-чак! Чик-чак!
Алли çук—шаккаť.
Пуçӗ çук—шутлаť.
Куçӗ çук—кӑтартаť.

*9 сехетчен шкула çит!*

## Наçтук.

Наçтук шкултан вĕренсе кил
таврăннă. Килĕнче аслашшĕ анча
пулнă. Наçтук сĕтел хушшине ларн
та аслашшĕне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Аслашшĕ савăнса итлесе ларнă.



## Ĕç ерни.

Ернере çичĕ кун. Ултă кун шкулта
вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

Кун ячĕсем.
Тунтикун. Ытларикун.
Юнкун. Кĕçнерникун.
Ернекун. Шăматкун.
Вырсарникун.




# Ҥҥ

## Супӑҥ.

Супӑҥ кӑпӑкӗ шап-шурӑ. Алӑсене шуратать, пите-куҫа тасатать. Супӑҥпеле ҫӑвӑнар.

Таса сывлӑш,
таса шыв
пирӗн сывлӑхшӑн
питӗ кирлӗ.

*Ҥҥ*



## Мӑкӑҥ.

**Мӑкӑҥ ҫеҫки ҫурӑлсан,**
**килет пахча илемӗ.**
**Мӑкӑҥ ҫеҫки тӑкӑнсан,**
**кайать пахча илемӗ.**

*Ванюк. Супӑҥ. Мӑкӑҥ.*

Ӳ ӳ

## П ӳ р т.

Иванпа Петĕр шкулта хăма татăкĕсенчен пӳрт тунă. Пӳрчĕн алăкĕ те, чӳречи те пулнă.

Шала вĕсем сĕтел туса лартнă. Вĕсем ăна йулташĕсене кăтартнă. Пурте савăннă.





## Й у р ă.

**Касрăм, касрăм пĕрене,**
**турăм лартрăм шурă пӳрт.**
**Ҫич чӳрече кастартăм,**
**пĕри тухрĕ хăйпăнса.**



## Йалти пӳрт.

Йалта пӳртсене йăвăçран тăваççĕ. Йалти пӳртсем пĕчĕккĕ. Вĕсем пĕр хутлă анчах.

## Хулари çурт.

Хулари çуртсем пысăк. Вĕсем тăватпилĕк хутлă. Вĕсенче пӳлĕмсем нумай. Кантăкĕсем пысăк, çавăнпа çутă.

Хулари çуртсене чулран, кирпĕчрен тăваççĕ.



*Йăвăç пӳрт. Чул çурт.*



## Тăвайкки йаранни.

Ех, тăвайкки, тăвайкки,
мĕн чул ача йаранаť!
Çуна, йĕлтĕр, йе коӊки
тăвайккине йакатаť.
Алăсем шăнса кӳтни
ачасене ним те мар.
Кулса кăна йаранар,
çав вăл хĕлле савăнни.

---

Аťа, Ваӊук, урама,
унта сана кĕтеççĕ.
Миша, Анна, Хĕвекла
выљамашкăн чĕнеççĕ.



## Пирĕн ăмăрту.

Епĕр кӳршĕри шкулта вĕренекен ачасемпе ăмăртса ĕçлетпĕр.

Начартарах вĕренекенсене пулăшатпăр.

Шкула кун сиктермесĕр çӳретпĕр. Кĕнекесене, тетраҫсене тирпейлĕ тытатпăр.

## Ваҫук.

Пирĕн Ваҫук пионер,
пур ачашăн вăл пример.
Ирех тăраҫ, тумланаҫ,
тулта çӳрет, уçăлаҫ.

Ирхи апат çиет те,
шкула тухса уттараҫ.
Хут вулама вĕренет,
тĕрлĕ ĕçпе паллашаҫ.



## Савăт.

—Машинă ăçтан килет? тесе ыйтрĕ Йакур учителрен.

—Машинăсене савăтсенче тăваççĕ, терĕ учител.

Савăтра темĕн тĕрлĕ машинăсем тăваççĕ.

Савăтра станок урапнсем, шăлтăрмасем çаврăнса тăраççĕ. Пысăк мăлатуксем шаккаççĕ.

Пысăк кăмакасенче тимĕр шăратаççĕ.

Савăтра темĕн чухлĕ çын ĕçлет.



Бб

| р | а | б | о | ч | и |

**Рабочисем.**

Акă савăт. Унта рабочисем ĕçлеççĕ. Унта мĕн чухлĕ рабочи! Арçынсем, хĕрарăмсем, пурте пĕрле ĕçлеççĕ.

---

Колхозра колхозниксем ĕçлеççĕ. Рабочисемпе колхозниксем çирĕп çыхăну тытаççĕ.

| Ес рабочи,<br>еп колхозник. | Епĕр иккĕн<br>пĕр тăван. |
|---|---|

*б*

*Саватра рабочисем ĕçлеççĕ.*



## Пирĕн шеф.

| Ф |
|---|

| ш | е | ф |
|---|---|---|

Савăтри рабочисем пирĕн шкула шефа илчĕç. Вĕсем пире кĕнекесем, хут, тата кăранташсем илсе пачĕç.

Савăтри рабочисем пирĕн пата часчасах килеççĕ.

Епĕр те вĕсем патне кайса килтĕмĕр. Савăтра машинăсемпе ĕçленине куртăмăр. Савăтри шкула, рабочисен клубне кĕрсе тухрăмăр.

Рабочисен столовăйне кĕрсе апат çирĕмĕр.

*Шеф пире пулăшат.*



## Хулапа йал.

Колхоз хулана тырă, аш, сĕт, çу, çăмарта. сӳс-кантăр, çăм парат̆.

Хуларан колхоза тăвар, спичкă, краççын, супăҥ, çитсă, сахăр килет.

Машинăсем: трактăр, акапуç, тырă акмали, тырă вырмали, авăн çапмали тата ытти машинăсем те килеççĕ.



Трактăр.



Тырă акмали.



Акапуç.



Тырă вырмали.



## Автобус.

Акă пыраť автобус
аслă çулпа кĕрлесе.
Çил пек вĕçет малала,
кайăк вĕçсе çитес çук.

## Автомобил.

Автобуспа автомобил лашасăрах чупаççĕ. Автомобил çине те, автобус çине те çынсем ларса çÿреççĕ.

Автобус.
Автомобил.
Рабочи.



*Автобус. Автомобил.*



Г

г|р|у|з|о|в|и|к

## Грузовик.

Тавар турттармали автомобиле грузовик теççĕ.

Грузовик автомобилех. Анчах грузовик автомобил пек хытă кайаймасть. Грузовик çине тавар нумай тийеме пулать.

Гг



Аероплан сывлăшра вĕçет. Автомобилпе грузовик, тата автобус çĕр çинче чупаççĕ.

Аероплан пит хăвăрт вĕçет. Вăл автомобилрен те хытă кайать.

Грузовик. Килограм.

Грузовикпе тавар турттараççĕ.



**Радио.**

Д

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| р | а | д | и | о |

Колхозра радио,
шкулта та радио.
Пирĕн килте те радио пур.

*д*

Йурăсем йурласа кăтартаť,
çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.
Мĕн вăл?

*Радио.*



## Ударниксем.

Ĕçе тимлĕрех те тирпейлĕрех тăвас тесе, колхозсенче ударлă бригадăсем тăваççĕ. Ударник колхозра примерлă, колхозăн чи аван членĕ. Ударник колхоза çирĕплететь.

## Ударник пулар.

Савăтра ударник.
Колхозра ударник.
Шкулта та ударник.
Пурте ударник пулар.

---

Çамрăк ударниксем авантарах вĕренме тăрăшаççĕ. Кайа йулакансене пулăшаççĕ. Пурте ударник пулар!



Ц

р | е | в | о | љ | у | ц | и

## Окт̆абӗр ревољуцийӗ.

Епӗр шкулта Окт̆абӗр ревољуцине уйавласа ирттертӗмӗр. Хӗрлӗ йалав турӑмӑр. Йурӑсем йурларӑмӑр. Сӑвӑсем каларӑмӑр. Пионерсемпе пӗрле пуху туса ирттертӗмӗр.

Ревољуци.

Ре-во-љу-ци

*Ц*

*Окт̆абӗр ревољуцийӗ*
*сывӑ пултӑр!*

Ж

д | е | ж | у | р | н | и



## Дежурни.

Шкулта пирĕн дежурни пур. Вăл класа тирпейлет. Шкулти йĕркене асăрхать.

Епĕрăна итлетпĕр. Вăл хушнине тăватпăр.

Черечĕпе епĕр пурте класра дежурни пулатпăр.

Партăсене шăлса тухатпăр. Клас тускине тасататпăр.

Урок пĕтсен йаланах фортăчкă уçса хуратпăр.

*Ж*

*Павăл дежурни.*




## Октăбĕр ачисем

Ех, хастарлăнçке утатпăр
  епĕр, октăбĕр ачисем.
Пит патмарăн хаљ ӳсетпĕр
  çĕнĕ пурăнăç калчисем.
Килĕр, килĕр, пурте килĕр
  октăбрйатсен ĕретне!
Пурте хĕрлĕ çăлтăр илĕр,
  пурте килĕр вĕренме.

---

Рабочисен ачисем—
  нимĕçсемпе французсем,
  негăрсемпе индуссем,
  китайсемпе йапонсем!
Епĕр, октăбĕр ачисем,
  сире салам йаратпăр!



## В. И. ЛЕНИН.

Вăл пĕтĕм ĕçхалăхĕн
çулпуçĕ,
аслă вĕрентекенĕ,
çывăх тусĕ пулнă.
Епĕр Ленин çулĕпе пыратпăр.
Ленин кăтартса хăварнине
тăватпăр.



# И. В. СТАЛИН.

Сталин пĕтĕм ĕçхалăхне Ленин кăтартса хăварнă çулпа йертсе пыраť.

Сталин—коммуниссен партин çулпуçĕ.

Сталин—пĕтĕм ĕçхалăхĕн çулпуçĕ.



**Хĕрлĕ çар—пирĕн вăй.**

Пире вăрçă
кирлĕ мар.
Ĕçхалăхшĕн
вăрçă—шар.

Анчах çăтлăх тăшмансем
пирĕн çине тăрсанах,
хатĕр тăраŤ Хĕрлĕ çар—
пире сыхлаŤ йаланах.




## Çамрӑк вӑй.

Коммунис ӗçне малала йама пирӗн комсомол пур. Комсомол вырӑнне пионер ӳсет. Пионерсен шӑлнӗсем—октябрйонӑксем. Вӗсем пӗчӗклех çӗнӗ пурӑнӑç тума вӗренеççӗ, коммунисӑм çулӗпе пыраççӗ.

---

Манӑн атте коммунис,
анне коммунискӑ.
Манӑн пичче пионер,
аппа комсомолкӑ.
Епӗ октябрйонӑк.



## Сакăр çулхи ачасем пурте шкула!

Унта та,





кунта та

шкула кайаççĕ.

Пĕрисем çуран утаççĕ, теприсем çунапа пыраççĕ.



*Совет çĕршывĕнче ачасем 8 çултан пуçласа пурте шкулта вĕренеççĕ.*

## Йулхав Уртем.

Ширĕн Уртем час-часах
йулхавланма йуратаť.
Шкула кайма тăрсанах
унăн пуçĕ ыратаť.

Шкула кайас мар тесе
чирленчи те пулкалаť.
Хăш чух тата кунĕпех
йытăсене хăвалаť.

Ак пайан каллех шкулта
партти унăн пуш-пушах.
Вăл çапла ик-виç кунта
пĕр кун çеç пыраť шкула.

Шухăшла-ха ес, Уртем,
ун пек ăçтан вĕренен!

## Авантарах вĕренер.

Октабрйонăксем, итлĕр-ха:
кам вулама вĕренмен,
шут йĕркине ăнланман,
тăрăшарах вĕренĕр!

## Кам тетрачĕ çакăн пек?



Ак ку мĕн мур йапали?
Милке тесен, милке мар.
Пирĕн урай çумали
мучала та ун пек мар.
Ех, ачасем, ачасем,
çак мĕнне те пĕлместĕр.
Хăш ачасен тетрачĕсем
çакнашкалне курмастăр.
Пăхăр халĕ лайăхрах,
вара паллăр хăвăрах.



*Тетратсене таса тыт.*

## Кĕнекене тирпейлĕ усра.

Ак Петĕрĕн кĕнеки—
вараланчăк, пăхма çук.
Таçта унăн хуплашки!
Пуçне-вĕçне тупма çук.

Хут листисем вырăнне
çĕтĕк-çатăк чăмрашки.
Ун пек май çук вĕренме.
Кĕнекӳне ан варала.



*Кĕнекене тирпейлĕ тытса усра. Ан варала. Ан лутăрка.*

## Икĕ ача.

Сăмахсене ăнлансах
пĕри кĕнеке вуланă.
Кĕнекине хупсанах
вуланине йăлт маннă.
Ес кĕнеке вула та,
мĕн çырнине асра тыт.

## Букварь вĕçĕ.

Халĕ епĕр, ачасем,
вулама пĕлетпĕр.
Кирек мĕнле сăмаха
такăнмасăр вулатпăр.
Çырасса та пит йака,
пĕр йĕркепе çыратпăр.



Аа Бб Вв Гг Дд

*Аа Бб Вв Гг Дд*

Ӑӑ Ее Ӗӗ Жж Зз

*Ӑа Ее Ӗӗ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Љљ

*Ии Йй Кк Лл Љљ*

Мм Нн Њњ Оо Пп

*Мм Нн Њњ Оо Пп*

Рр Сс Ҫҫ Тт Ťť

*Рр Сс Ҫҫ Тт Ťť*

Уу Ӳӳ Фф Хх Цц

*Уу Ӳӳ Фф Хх Цц*

Чч Шш Ыы

*Чч Шш Ыы*

Ц. 1937.
Акт № 7
Вкладн. л.
Инв. № 7550

Хакĕ 45 пус.
Цена 45 коп.
0-05

Чув.
3-2000а

А. Т. Трофимов.

# БУКВАРЬ.

Четвертое издание

Утвержден НКП Чуваш. АССР

Редактор Чувашгиза Н. Андреев. Техредактора: А. Быков и Н. Янгас.

Послано в производство 9/VIII-1936 г. Подписано к печати 17/VIII-1936 г.
Уп. Чувашлита № 1485. Чувашгиз № 191. Ст. ф. б. 62×94 1/16. Об'ем 4,5 п. л.
В п. л. 24000 п. з. У—1. Заказ № 1398. Тираж 25.000 экз.
Г. Чебоксары, типография № 1 Чувашгиза, Канашская, 16.

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1936